Л.АГАКОВ ҪУРАЛНӐРАНПА 100 ҪУЛ

# Пӗрремӗш лауреат

**Ака уйӑхӗн 18-мӗшӗнче Чӑваш халӑх писателӗ, Чӑваш ҫамрӑкӗсен Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ премин пӗрремӗш лауреачӗ Леонид Яковлевич Агаков ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитет. Вӑл учитель ҫемйинче ҫуралнӑ, Етӗрнери вӑтам шкултан тата хулари педагогика техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ. 1930 ҫулта Шупашкара куҫса килнӗ, «Канаш» /хальхи «Хыпар»/ хаҫатра ӗҫленӗ. 1977 ҫулта вилнӗ. Ӑна Богдан Хмельницкий урамӗнчи масарти хисеплӗ ҫынсен ретӗнче пытарнӑ.**

Чӑваш тӗнчине лайӑхлатас тесе тӑрӑшнӑ ҫынсен чапӗ вӑхӑт иртнӗҫемӗн чакса мар, пысӑкланса пырать. Леонид Агаков прозаик, драматург, публицист, театр критикӗ, куҫаруҫӑ пирки те ҫавнах каламалла. Иртнӗ кӗркунне Шупашкарӑн Ҫар мухтавӗн музейӗнче талантлӑ писателе, фронтовика чысласа асӑну каҫӗ иртрӗ. Ӑна пултаруллӑ сӑвӑҫ, юрӑ ӑсти Светлана Асамат ертсе пычӗ. Л.Агаковӑн хӗрӗ Алиса, ывӑлӗ Вячеслав ашшӗне ӑшшӑн аса илсе калаҫрӗҫ. Залра студент йышлӑччӗ, ватӑ ҫын та нумайччӗ. Сӑмах Леонид Яковлевичӑн феноменӗ /никамӑннипе танлаштарма ҫук пултарулӑхӗ/ пирки пычӗ. Унтанпа самаях вӑхӑт иртрӗ пулсан та тӗл пулура тухса калаҫнӑ ҫынсен сӑмахӗсем халӗ те хӑлхара янӑраҫҫӗ, пуҫра ҫӗнӗ шухӑшсем ҫуратаҫҫӗ.

Фронтран Леонид Агаков 1944 ҫулта аманса таврӑннӑ та тӳрех кӗнеке издательствинче тӗп редактор ӗҫне кӳленнӗ. Вӑл вӑхӑтра вӑрҫа пула арканнӑ хуҫалӑха ура ҫине тӑратасси ҫӗршывӑн тӗп тӗллевӗсенчен пӗри пулнӑ. Культурӑна, искусствӑна, литературӑна аталантарассине те манӑҫа кӑларман. Чӑваш Енре те вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хупӑннӑ хаҫатсемпе журналсене ҫӗнӗрен кӑларма пуҫланӑ. Вӑрҫӑченхи «Сунтал» вырӑнне 1946 ҫулта «Ялав» журнал тухма тытӑннӑ, унӑн малтанхи номерӗсенчех Леонид Агаковӑн «Ылтӑн вӑчӑра» повеҫӗ пичетленнӗ. Библиотекӑсенче ӑна ҫынсем черет тӑрса вуланӑ, ҫулталӑкрах журнал тиражӗ икӗ хут ӳснӗ. Вӑл иртнӗ ӗмӗрӗн хӗрӗхмӗш ҫулӗсен вӗҫӗнче кӗнеке хальлӗн пичетленсе тухнӑ.

Леонид Яковлевич пурнӑҫ тӑршшӗпех ҫыравҫӑн йывӑр та кӑткӑс ӗҫне тӗрлӗ учрежденире вӑй хунӑ чухне туса пынӑ. Вӑрҫӑ пуҫланиччченех Мускаври театр искусствин патшалӑх институтне пӗтернӗскер Шупашкара таврӑнсан театр техникумӗнче студентсене вӗрентнӗ, Халӑх комиссарӗсен канашӗн ҫумӗнчи искусство управленийӗн инспекторӗнче, Писательсен союзӗн правленийӗн председателӗнче, «Тӑван Атӑл» альманах редакторӗнче ӗҫленӗ.

Пурнӑҫа таранӑн пӗлни, ҫӑл куҫ пек тапса тӑракан пултарулӑх, илемлӗх тӗнчин вӑрттӑнлӑхӗсене алла илни, чӑтӑмлӑх Агакова литература ӗҫӗнче ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума пулӑшнӑ. Романсем, повеҫсем, калавсем, пьесӑсем, очерксем ҫырса 48 кӗнеке кӑларнӑ. Вӗсен пӗтӗмӗшле тиражӗ ҫур миллион экземплртан та иртет. Ҫапла вара чӑваш литературинче вӑл чи вуланакан автор шутланать.

Чӑваш драматургийӗнче те вӑл самаях сумлӑ вырӑн йышӑнать. Унӑн «Ултав» тата «Хӑват» пьесисем тӑрӑх Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫиччченех театрсем спектакльсем лартнӑ. «Пӗрре, ҫуркунне», «Ылтӑн вӑчӑра» повеҫсем тӑрӑх хатӗрленӗ инсценировкӑсем те Чӑваш академи драма тата Ҫамрӑксен театрӗн репертуарне кӗме тивӗҫлӗ пулнӑ.

Куҫару ӗҫне пур писатель те тӑваймасть. Леонид Агаков пирки пултаруллӑ та тухӑҫлӑ тӑлмач тени ӳстересе каланӑ сӑмах мар. Чӑваш Республикин Пичет архивӗн фончӗсенче Леонид Агаков куҫарнӑ утмӑла яхӑн кӗнеке упранать. Агаков тем тӗрлӗ литература та куҫарнӑ, ҫапах илемлӗ литература унӑн куҫарӑвӗсенче – тӗп вырӑнта.

Пултаруллӑ ҫыравҫӑн таланчӗн тата тепӗр енне те асӑнмалла. Вӑл – Л.Агаков театр критикӗн тата театроведӑн тивӗҫӗсене нумай ҫул мӗн пултарнӑ таран туса пыни. Чӑваш театрӗсем лартнӑ спектакльсене хакласа вӑл республикӑри хаҫатсенче ҫеҫ мар, Мускаври «Театр» тата «Театральная жизнь» журналсенче те рецензисем пичетлесе кӑларнӑ. Ас тӑватӑп-ха: республикӑри театрсенчен пӗринче Николай Терентьевӑн «Пӑр ҫапнӑ ҫеҫпӗл» драми тӑрӑх спектакль лартнӑ хыҫҫӑн чӑвашла пичетленекен хаҫатсенчен пӗринче Леонид Яковлевичӑн рецензийӗ ҫапӑнса тухрӗ. Унӑн шухӑшӗпе килӗшменнисем те тупӑнчӗҫ. Хӗрӳ дискусси пуҫланчӗ. Вӑл темиҫе уйӑха пычӗ. Театрсен ҫивӗч ыйтӑвӗсемпе писатель яланах кӑсӑкланатчӗ. Тӗрлӗ вӑхӑтра унӑн хаҫат-журналта пӗтӗмпе 200 ытла рецензи-хаклав пичетленсе тухни те ҫакнах ҫирӗплетет.

Мана Леонид Яковлевичпа ҫывӑх паллашма тӳр килмен. Ҫапах писательсен съезчӗсенче, творчество союзӗн пухӑвӗсенче эпӗ ӑна пӗрре мар курнӑ. Вӑл сахал калаҫакан, ҫынпа хутшӑнма юратман, кӑра кӑмӑллӑ этем пек туйӑнатчӗ. Съездсемпе пухусенче хайӗн мӑшӑрӗпе Александра Лазаревӑпа юнашар халӑхран уйрӑмрах ларатчӗ. Тухса сӑмах каланине ас тумастӑп. Унпа пӗрле ӗҫленӗ ҫыравҫӑсем Василий Давыдов-Анатри, Валентина Элпи, Иван Вашки ӑна хисеплесе ӑшшӑн аса илеҫҫӗ. Салхуллӑ пит-куҫ, сӳрӗк кӑмӑл уншӑн хайне хӳтӗлеме кирлӗ маска ҫеҫ пулнӑ тесе ӗнентереҫҫӗ, вӑл уҫӑ кӑмӑллӑ, мухтанине юратман, йӑпӑлтатнине чунран курайман ҫын пулнине ҫирӗплетеҫҫӗ.

Писателе халӑх питӗ хисепленине влаҫра лараканисем курнӑ. Унӑн литературӑри ӗҫ-хӗлӗ ӑнӑҫлине пӗлмен мар. Ҫавна кура ӑна Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе, медальсемпе, Чӑваш АССР Президиумӗн Хисеп грамотипе икӗ хутчен наградӑланӑ, «Чӑваш халӑх писателӗ» хисеплӗ ят панӑ.

Вӑхӑт малаллах шӑвать. Паллӑ ҫыравҫӑ ҫут тӗнчерен уйрӑлса кайнӑранпа 33 ҫул ҫитет ӗнтӗ. Леонид Яковлевич питӗ ир, 67 ҫултах ҫӗре кӗнӗ. Автор вилнӗ хыҫҫӑн «Ылтӑн вӑчӑра» виҫӗ хутчен, «Юманлӑхра ҫапла пулнӑ» икӗ хутчен ҫапӑнса тухнӑ.

**Геннадий УТКИН,**
**Раҫҫей Писателӗсен союзӗн членӗ.**